# Çĕнтерӳ çулĕ

1930 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕнчен тухать

сайт адресĕ: putpobedy.ru

электронлă адрессем: press_vurnar@rchuv.ru svetok11@mail.ru

ВĂРНАР РАЙОН ХАÇАЧĔ 2025 çул кăрлач /январь/ уйăхĕн 25-мĕшĕ • шăматкун • 5/11852 № • Хакĕ ирĕклĕ •

# Вăрнарсен хăйсен вăй-хăвачĕпе туллинрех усă курмалла

**Çак шухăш Чăваш ен Пуçлăхĕ Олег Николаев хутшăннипе пирĕн тăрăхра иртнĕ Правительство кунĕнче темиçе хутчен те янăрарĕ. Пĕр вăхăтрах пĕтĕмлетӳллĕ тата малашлăха палăртакан канашлăва министерствăсемпе ведомствăсен ертӳçисемпе представителĕсем те хутшăнчĕç. Тĕп доклада округ пуçлăхĕ Надежда Никандрова турĕ.**



*Олег Николаев Калинино райповĕн ĕçĕпе кăсăкланчĕ.*

**ПРАВИТЕЛЬСТВО КУНĔ**

## Фри туса кăларĕç, хăмла çитĕнтерĕç...

Вăрнар округĕн промышленность, ял хуçалăх отраслĕн, ытти сферăсенчи хăвачĕ-çитĕнĕвĕсем пирки вулакансем аван пĕлеççĕ. Çавăнпа паян ытларах çывăх вăхăтра пурнăçа кĕртме палăртнă проектсем çинче чарăнса тăрас килет. Вĕсем чăннипех те округ экономикинче пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнĕç.

Округра кĕçех хăмла çитĕнтерекен тата тирпейлекен çĕнĕ, паянхи пурнăçа тивĕçтерекен комплекс хута кайĕ. Çывăх ултă çулта плантацисем 100 гектартан та иртмелле. Инвестицисен калăпăшĕ 1,6 миллиард тенкĕпе танлашать. Ку уйрăм çын укçи-тенки. Проект-драйвер 20 çынна тăтăш, 200 çынна сезонлă ĕçпе тивĕçтерĕ. Çакă та пĕлтерĕшлĕ, ĕçе пурнăçа кĕртнинчен çулталăкне бюджета 70 миллион ытла налук пырса кĕрĕ. Проект темиçе тапхăрпа пурнăçланĕ. Вăл Вăрнаршăн хăйнеевĕрлĕ визитлă карточка вырăнне пулĕ.

Унччченхи лицей шăпи ентешсене ку таранччен чăннипех хумхантаратчĕ. Астăватăр пулĕ, темиçе çул каялла кунта футбол центрне йĕркелес тĕлĕшпе канашлу та пулнăччĕ. Шел, ку шухăша пурнăçа кĕртессине малалла аталантармарĕç. Халĕ тепĕр шанăç пур. Лицей вырăнĕнче «Чăваш ен чĕри» ятпа сывлăха çирĕплетекен комплекс тăвасшăн. Вăл республикăн 2030 çулччченхи стратегине кĕнĕ. Инвестицисен калăпăшĕ 160 миллион тенкĕпе танлашать. Çĕнĕ комплекс санаторипе курорт тивĕçтерĕвĕсене аталантарма, туристсен шутне ӳстерме пулăшĕ.

Тепĕр проект та пурнăçа кĕрсен лайăх çаврăнса каймалла. Ун авторĕ – «Мураты» ял хуçалăх кооперативĕ. Вăл «фри» валли касса вакласа шăнтнă çĕрулми производствине йĕркелесшĕн. Автоматизациленĕ лини сехетре 350 кг таран продукци кăларĕ. Çулталăкне вара – 500–600 тонна. Ĕçе 2028–2030 çулсенче тытăнма планланă.

Вăрнарсем тăратнă ытти проектсем те пĕлтерĕшлĕ. Муниципалитетра, ак, пластик савăтсене тирпейлекен предприяти тăвасшăн.

Пĕтĕмпе вара Чăваш енĕн 2030 çулччченхи тапхăра йышăннă социаллă экономика аталанăвĕн комплекслă программине вăрнарсен 13 инвестици проекчĕ (2,3 млрд тенкĕлĕх), строительство енĕпе 148 инфраструктура проекчĕ (3,7 млрд тенкĕлĕх), 2 мегапроект («Хăмла çитĕнтерессине аталантарассисĕр» пуçне ĕмĕре активлăхпа тăсакан «Манăн социаллă центр» сете уçасси) кĕнĕ.

Комплекслă программа йĕркипе округри 11 культура çуртне юсама, модельлĕ икĕ библиотека, нумай функциллĕ çемье центрне, социаллă центр уçма, обществăлла хутлăхсене хăтлăх кĕртме тата спорт инфраструктурине лайăхлатма палăртнă.

Чăваш ен Пуçлăхĕ мĕнпур ĕçе пĕрлĕхе хывма каларĕ, пĕччеңшер туртнипе çитĕнӳсем пулмассине аса илтерчĕ.

### «Президент» ыйтрĕ-тĕк, пулатех...

Республика тата Вăрнар округĕ умĕнче тăракан задачăсем пирки Михаил Ноздряков, Сергей Артамонов, Максим Иванов, Владимир Степанов вице-премьерсем, промышленность министрĕ Сергей Лекарев, экономика аталанăвĕн, культура та цифра аталанăвĕн министрĕсен заместителĕсем Ольга Рассанова, Татьяна Казакова тата Екатерина Грабко тухса каларĕç. Вĕсем муниципалитетра халăха хумхантаракан проблемăсенчен чылайăшне пурнăçлама май килнине каларĕç.

Çавăн пекех вăрнарсене патшалăх программисене, грантсене ытларах хутшăнма йыхравларĕç. Хальлĕхе ентешсем вĕсемпе сахалтарах усă курни таблицăсенчен, графикăсенчен аван курăнчĕ. Предприятисем кăна мар, уйрăм çынсем те хăйсен ĕçне аталантарма патшалăх пулăшăвĕпе усă курма пултараççĕ. Программăсем пур сферăра та тенĕ пек ĕçлеççĕ. Социаллă контракт, инициативлă бюджетировани, ял хуçалăхĕнчи грантсем... – утăм тумалла çеç.

Округ умĕнче тăракан çивĕч ыйтусем çук мар. Шывпа тивĕçтерес тата юхса тухакан шывсене тасатас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлемеллине палăртрĕ Олег Николаев. Социаллă пĕлтерĕшлĕ таварсен хакĕсене эрнесеренхи тимлĕхре тытма ыйтрĕ. Çĕрĕшнĕ çурт-йĕртен куçарассипе Строительство министерстви программа хатĕрлеме тытăннине пĕлтерчĕ...

Вăрнарти И.Н.Никифоров ячĕллĕ 1-мĕш шкул пристройĕн строительстви каллех плансен шутне кĕнĕ. «Çапах та ун строительствине хăçан пуçлĕç?» – ыйтрĕ ку шкул самоуправленийĕн президенчĕ Глеб Николаев.

Олег Николаев строительство валли 2023 çул вĕçĕнче укçа пăхнине, анчах та торгисене никам та хутшăнманнине палăртрĕ.

– «Президент» ыйтать-тĕк, шантаратăп, кăçал ăна çĕклеме пуçлăпăрах,– терĕ Олег Николаев.

Залран пăшăрхануллă ыйтусем татах çĕкленчĕç. Александр Шашкаров депутат вăрнарсене чылай çул канăçсăрлантаракан Илларионов урамĕн шăпипе кăсăкланчĕ: «Республика пĕлтерĕшлĕ çул тăршшĕпе çутă та, тротуар та çук»,– интересленчĕ вăл. Ку ыйтупа ĕçленине Çĕнĕ çул умĕнхи интервьюра округ пуçлăхĕ Надежда Никандрова «Çĕнтерӳ çулĕн» вулаканĕсене пĕлтернĕччĕ. Александр Геннадьевич «Шăхасан – Калинино» автоçул юсавне тăсса янишĕн те пăшăрханса калаçрĕ.

Евгений Захаров депутата Тăраллă пăр катокне, вăл округшăн пĕлтерĕшлĕ спорт объекчĕ пулнине шута илсе, тытса тăрас, юсас ыйту канăçсăрлантарать. Олег Николаев катока нормативсене пăсса çĕкленине, юсавĕ çав тери хакла ларма (çĕннине çĕкленипе танах) пултарнине каларĕ, анчах та ыйтăва профильлĕ министерствăна тимлĕхе илме ыйтрĕ.

Малти Ишек территори пайĕн пуçлăхĕ Вячеслав Ластухин, Ярмушка территори пайĕн специалисчĕ Лиана Григорьева хăйсен тăрăхĕсенче пурнăçланă ĕçсемшĕн тав турĕç.

«Республика пуçлăхĕ пулма мĕнле енсем кирлĕ?» – ыйтрĕ Санарпуç шкулĕн вĕренекенĕ. «Ĕçе юратмалла. Вара пурте пулать!» – çирĕплетрĕ Олег Николаев.

Вăл вăрнарсене наци тĕллевĕсене пурнăçлама, патшалăх программисене хастартарах хутшăнма, вырăнти майсене усă курса тăван ен аталанăвĕшĕн ытларах тăрăшма ыйтрĕ. Çынсен сĕнĕвĕсене яланах хапăл пулнине каларĕ. «Чылай ыйтăва, тĕпрен илсен – ăшăпа, çутăпа, шывпа тивĕçтерессине, шкулсемпе, больницăпа çыхăннисене республика шайне çĕклерĕмĕр ĕнтĕ, вĕсене пурнăçлама чи çĕнĕ стандартсемпе усă куратпăр. Анчах та айтăр-ха пĕрле шутлар: 28 пин ытла çын пурăнакан, промышленность, ял хуçалăхĕ тата инфраструктура лайăх аталаннă муниципаллă пĕрлĕхре пурте пĕр тан пурăнччăр тесе тĕн тумалла?»– пĕтĕмлетрĕ вăл хăй сăмахне.

### Тивĕçлисене – награда

Вăрнар тăрăхĕнчи Правительство кунĕ ырă пулăмпа вĕçленчĕ. Олег Николаев Вăрнарти ача-пăча ӳнер шкулĕн преподавательне Елена Есенцевана тата Централизациленĕ клуб тытăмĕн директорне Светлана Журавлевана «Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ят илнĕ ятпа саламларĕ, кăкăр çине çакмалли паллăпа чысларĕ.

**Светлана ЧИКМЯКОВА**

**ШУХĂШ**

**Нэлли СТЕКЛОВА,**
**педагогика ĕçĕн ветеранĕ:**

**– Республика Пуçлăхĕ Олег Николаев тата правительство членĕсем Вăрнарта ирттернĕ тĕлпулу пысăк шанăç çуратрĕ. Пирĕн округра хăмла отрасльне анлăн аталантарас тени, унччченхи лицей вырăнĕнче çĕнĕ проект пурнăçланасси савăнтарчĕ. Уйрăмах аслă ӳсĕмри тата хевтесĕр çынсем валли инфраструктура туса хурас тени кăмăла çĕклерĕ. Аслă ӳсĕмрисем пысăк хастарлăх кăтартаççĕ. Эпир ку енĕпе мухтанма пултаратпăр. Ак, РДК-ри ветерансен хорĕ яланах хастар, кĕмĕл волонтерсем маскировка сеткисем çыхаççĕ, округри тĕрлĕ мероприятисене хутшăнаççĕ.**

**Палăртнă плансене тухăçлă пурнăçа кĕртсен аванччĕ.**

**УЙĂХ КАЛЕНДАРĔ**

| Число | | 26.01 | 27.01 | 28.01 | 29.01 |
|---|---|---|---|---|---|
| Хĕвел | тухать | 07.55 | 07.54 | 07.52 | 07.50 |
| | анать | 16.11 | 16.13 | 16.15 | 16.17 |
| Кун тăршшĕ | | 08.16 | 08.19 | 08.23 | 08.27 |
| Уйăх тăхри | | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | çĕнĕ уйăх |
| кунĕ | | 27 | 28 | 29 | 1 |

| | 26.01 | 27.01 | 28.01 | 29.01 |
|---|---|---|---|---|
| кăнтăрла | -1 | +1 | +1 | +2 |
| çĕрле | -1 | +1 | 0 | 0 |

## Çĕнтерӳ кунĕ умĕн – тӳлев

**Раççей Федерацийĕн Президенчĕ Владимир Путин Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче çĕнтернĕренпе 80 çул çитнĕ тĕле унта хутшăннисене пĕр хутчен укçа-тенкĕ тӳлесси пирки калакан Указа алă пуснă.**

Унпа килĕшӳллĕн вăрçă участникĕсене, инвалидчĕсене, вилнĕ пулсан – вĕсен мăшăрĕсене, «Жителю блокадного Ленинграда», «Жителю осажденного Севастополя», «Жителю осажденного Сталинграда» паллăсемпе наградăланă граждансене тата концлагерьсен çула çитмен узникĕсене 80 пин тенкĕ куçарса парĕç. Тыл ĕçченĕсем тата концлагерьсен çитĕннĕ узникĕсем 55 пин тенкĕ илĕç. «Юбилейлă» тӳлеве Социаллă фонд Президент Указĕпе Çĕнтерӳ кунĕ умĕн хăшпĕр ветерансене кашни çулах тӳлекен 10 пин тенкĕ çумне хушса парĕ. Ветерансен ятарласа заявлени çырмалла мар. Малтанхи даннăйсемпе усă курĕç. Приднестровьере, Кăнтăр Осетире, Абхазире тата Прибалтикăра пурăнакан ветерансене те Çĕнтерӳ уявĕччен укçа-тенкĕне куçарса парĕç.

**ХӲТЛĔХ**

# Влаçпа куçа-куçăн уçă калаçу

ПРАВИТЕЛЬСТВО КУНĔ

**Правительство кунĕн йĕркипе Чăваш Республикин ял хуçалăх министрĕ Сергей Артамонов Патшалăх Канашĕн Председателĕн заместителĕпе Виктор Горбуновпа, депутачĕсемпе Роман Алексеевпа, Владимир Свешниковпа пĕрле Вăрнар округĕн ертӳлĕхĕпе, аграри тытăмĕн, территори пайĕсен пуçлăхĕсемпе тĕлпулу ирттерчĕ.**



В.Свешников, Р.Алексеев, С.Артамонов, В.Горбунов, Н.Никандрова.

Сергей Артамонов Вăрнар округĕнчи агропромышленность комплексĕн аталанăвне тишкерчĕ, иртнĕ çулхи ĕçхĕле пĕтĕмлетрĕ, «Агроӳсĕм» стратегин малашнехи ĕç тĕллевĕсене палăртрĕ.

Чăваш ен пилĕк çул каярах хăшпĕр кăтартупа Атăлçи федераци округĕнче малтисен ретĕнче пырайман. Аграрисем патшалăх пулăшăвĕпе туллин усă курни, хастарлăха чакарманни ĕç кăтартăвĕсене пысăклатма май панă. «Халĕ эпир ял хуçалăх продукцине 100 гектар çĕр пуçне туса илес енĕпе Атăлçи федераци тăрăхĕнче виççĕмĕш вырăн йышăнатпăр», – терĕ вице-премьер.

Агропрома тĕрлĕ енсемпе аталантарма май пур. Пысăк инвестици проекчĕсем калăпăшлă ĕçе пурнăçа кĕртме пулăшаççĕ. Акă, хальхи вăхăтра хăмла отрасльне аталантарассине пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Ӳсентăранăн ырă шăршăллă сорчĕсем пĕлтĕр вăйлă тухăç панă. «Симĕс ылтăн» плантацийĕсене пысăклатассине, хăмлана вырăнтах тирпейлес енĕпе çĕнĕ комплекс çĕклессине 2030 çулччен пурнăçа кĕртмелле. Тепĕр пилĕк çултан мĕнле тăрăшнине пĕтĕмлетмелле пулĕ. Инвестици проекчĕсене пурнăçлани халăха çĕнĕ ĕç вырăнĕсемпе тивĕçтерет.

2025 çул пуçламăшĕнче «Пĕчĕк тата вăтам предпринимательство» наци проекчĕ вĕçленчĕ. 5 çулта республикăри 296 фермер гранта тивĕçнĕ. Вăрнар енчи хастарсем те патшалăх пулăшăвĕпе усă курчĕç. Паллах, пĕчĕк тытăмри хуçалăхсем валли грантсем малалла та пулĕç. Патшалăх тĕрев пани ĕçлекенсене хавхалантарать, пуçаруллă утăмсем тума пулăшать.

Кăçал Чăваш енри АПК-на тата ял территорийĕсене аталантарма федераци тата республика бюджечĕсенчен 4,55 миллиард тенкĕ уйăрнă. Сергей Геннадьевич ку сумма пĕлтĕрхинчен 32,5 процент ытларах тесе пĕлтерчĕ. Вăрнарти ял хуçалăх организацийĕсен ертӳçисем министрпа калаçнă чухне хăйсен шухăшĕсене уççăнах палăртрĕç. Китайра кăларнă техникăна туяннă тăкакшăн пĕр пайне саплаштарма субсиди иртнĕ çулхи пекех пăхса хăварма сĕнчĕç, сенаж хывмалли грузовиксем пахалăхлă пулнине çирĕплетрĕç. Вице-премьер сĕнĕве шута илчĕ.

Сосновски пултăранĕ тавра та калаçу пычĕ. Сиенлĕ ӳсентăран лаптăкĕсене тĕрĕс пĕлтермелле тесе палăртрĕ ведомство ертӳçи. Тĕслĕх те илсе кăтартрĕ. «Правда» хуçалăх пулнă территорире наркăмăшлă ӳсентăран пусса илнĕ лаптăк çуллен вăйланса пырать. Иртнĕ ĕмĕрте выльăх-чĕрлĕхĕн апат базине пуянлатма ĕрчетнĕ пултăранăн сиенĕ чăннипех пысăк. Сергей Артамонов ертӳçĕсемпе пултăрана хирĕç кĕрешес ĕçе епле йĕркелесе пымаллине сӳтсе яврĕ.

Ятарлă çар операцине хутшăнакан ентешсене пулăшу тăтăшах кирли каламасăрах паллă. Пархатарлă тивĕçрен пăрăнманшăн Сергей Геннадьевич ял хуçалăх таварне туса илекенсене ырларĕ. Хастар ертӳçĕсене Ял хуçалăх министерствин Тав çырăвĕпе чысларĕ.



СВО-на пулăшнăшăн награда илнисен пĕр ушкăнĕ: Н.Аливанов, А.Петров, В.Шумилов, Г.Спиридонов.

Вĕсем – Николай Аливанов (Вăрнарти аш-какай комбиначĕ), Андрей Петров («Санары»), Валерий Шумилов (К.Маркс ячĕллĕ кооператив), Геннадий Спиридонов («Мураты») тата ыттисем.

**Елена ПОРФИРЬЕВА**

## Саламлатпăр!



Хаклăран та хаклă çыннăмăра, чĕререн юратнă аннене, ырă чунлă кукамая – Кайри Тукай ялĕнче пурăнакан **Галина Николаевна АНИСИМОВАНА** – 60 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Вăрăм ĕмĕр, чĕре тулли телей, нумай-нумай ырă самантсем, пурнăçри кашни утăмра ăнăçу сунатпăр сана. Сывлăху хурçă пек çирĕп пултăр, вăй-халу çулсем иртсен те ан иксĕлтĕр, утас çулу яланах такăр тăтăр. Малашне те тăван кил ăшшине упраса, пире савăнтарса нумай çул пурăнма Турă сывлăх пиллетĕрччĕ сана, аннеçĕм. Пирĕн вара юнашар пулса йывăр самантсене çăмăлрах тăвасчĕ, кунсерен савăнăç кӳресчĕ, пулăшса пырасчĕ.

*Ан кулян пуçу шур тĕс илнишĕн, ан чирле, пĕл упрама хăвна.*
*Пирĕнтен ăш сăмаха эс йышăн: тавтапуç, аннемĕрĕм, сана.*

**Салампа – хĕрĕсем, кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем.**



**Вăрнарта пурăнакан** юратнă, ылтăнран та хаклă аннене **Мария Федоровна САВЕЛЬЕВАНА** кăрлач уйăхĕн 22-мĕшĕнче 73 çул тултарнă ятпа ăшшăн-ăшшăн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, пархатарлă кун-çул, çăлкуç пек тапса тăракан вăй-хал, тулли телей, инçе çул пек вăрăм ĕмĕр сунатпăр. Сăмахпа кăна сан умри парăма татма çук, паллах. Эсĕ пире питĕ кирлĕ. Турă малашне те упратăр сана! Сăн-питӳ хĕвел пек ăшă кулăпа çуталтăр яланах. Пирĕн тăван кил ăшшине упраса нумай çул пурăн.

*Пурăнсам савăнса, таса пул сывлăхпа,*
*Çулсене ан шутла, ватăлма ан васка.*
*Чĕререн юратса, çирĕп сывлăх сунса*
*Пур йышпа пухăнса саламлатпăр сана.*

**Ачисем, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕсем.**



Хаклă та юратнă çыннăмăрсене, кун çути парнелесе, телей пиллесе пурнăç çулĕ çине тăратнă аннепе аттене – **Юпшик Ялтăрара пурăнакан Елена Павловнапа Георгий Николаевич ГАВРИЛОВСЕНЕ** – пĕрлешсе çемье çавăрнăранпа 50 çул çитнĕ ятпа чĕререн тухакан чи ăшă та çепĕç сăмахсемпе саламлатпăр. Тăван кил вучахне упраса, пирĕншĕн тĕрев пулса тата нумай çул пурăнма çирĕп те таса сывлăх, çутă ăраскал, çăлкуç таппиллĕ вăй-хал, хуркайăк çулĕ пек вăрăм кун-çул, иксĕлми телей-савăнăç сунатпăр. Çывăх çыннăрсем, тус-тăвансем килсе çӳренипе пӳрт-çурт ăшăнса тăтăр. Çукки пур пултăр, пурри хушăнсах тăтăр. Эпир сире юрататпăр, сирĕнпе мухтанатпăр, эсир пурришĕн савăнатпăр.

*Çемье телейлĕ, кăмăл ырă, кил-çурт та ăшă эсир пуртан.*
*Сӳнми телей те çирĕп сывлăх сире сунатпăр кăмăлтан.*

**Ывăлĕпе хĕрĕ, мăнукĕ, çывăх тăванĕсем.**



Поздравляем **почетного ветерана компании «Август» в Вурнарах КАЗАНКОВУ Валентину Константиновну** с 85-летним юбилеем. Трудовую деятельность на заводе она начала в цехе ширпотреба лаборанткой. Затем работала инженером по подготовке кадров, техник-конструктором в отделе главного механика. Общий трудовой стаж на предприятии более 27 лет.

Уважаемая Валентина Константиновна, от всей души поздравляем вас с этой юбилейной датой, желаем доброго здоровья, крепости духа, вдохновения, теплых слов и заботы близких, уважения и доброты окружающих. Пусть каждый новый день подарит вам больше теплых встреч, добрых вестей и прекрасное настроение.

*Пусть здоровье, радость, счастье с вами дружат каждый час!*
*Пусть холодное ненастье стороной обходит вас.*
*Пусть морщинки вас не старят и не трогает беда.*
*Пусть судьба подарит вам жизни долгие года.*

**Администрация и Совет ветеранов компании «Август» в Вурнарах.**

ПУЛĂШУ

# Пурте тивĕçĕç

**Малашне транспорт налукĕн çăмăллăхĕсем Чăваш енре пурăнакан мĕнпур СВО участникĕсене пырса тивĕç. Саккун проектне Министрсен Кабинечĕн ларăвĕнче ырласа йышăннă.**

Финанс министрĕ Михаил Ноздряков пĕлтернĕ тăрăх, 150 лаша вăйĕчченхи хăватлă пĕр автомобильшĕн транспорт налукĕ тӳлессинчен Чăваш Республикин Çар комиссариатĕнчен кайнă СВО участникĕсене хăтарнă. Çавăнпа та регион Пуçлăхĕ Олег Николаев ку çăмăллăха республикăра пурăнакан мĕнпур СВО участникĕсем çине, контракта ăçта çырнине пăхмасăрах, сарма хушнă.

Çавăн пекех хăйсен ĕçхĕлĕнче газпа çӳрекен автобуссемпе, груз автомобилĕсемпе усă куракан организацисемпе уйрăм предпринимательсем валли çирĕплетнĕ транспорт налукĕн 50 процентлă çăмăллăха та тепĕр виçĕ çуллăха (2028 çулчченхи январĕн 1-мĕшĕччен) тăсма сĕннĕ.

# Одёр çинчи плацдарм...

**80 çул каялла, 1945 çулхи кăрлачăн 30-мĕшĕнче, Совет çарĕн 5-мĕш ударлă армийĕн салтакĕсем нимĕçсен Кюстрин хули çывăхĕнчи Одёр юханшывĕ урлă каçса плацдарм йышăннă. Историксем ăна каярах «Кюстринский плацдарм» тесе ят параççĕ. Çак вырăнта, Берлинран 80 çухрăмра, пирĕн паттăр ентеш – Алексей Иванович Иванов – хăюлăх кăтартса Совет Союзĕн Геройĕ ятне илнĕ.**



А.Иванов.

## ПАТТĂРЛĂХ

Алексей Иванов 1923 çулта Вăрнар районĕнчи Кив Сăрьел ялĕнче çуралнă. Туçи Çармăс тата Ямаш (Канаш районĕ) шкулĕсенче вĕреннĕ. Вăрнарти зооветтехникума пĕтерсен Шăхасан районĕнчи колхозра зоотехникра ĕçлеме пуçланă. 1942 çул пуçламăшĕнче çар комиссариачĕ янипе артиллеристсен курсне пĕтернĕ. Çав çулах 507-мĕш истребитель артполкĕн ретĕнче Сталинград хули çывăхне лекнĕ. Алексей Иванов 45 миллиметрлă хĕçпăшалăн («Сорокопятка» тесе ят панă фронтри салтаксем) наводчикĕ вермахт танкĕсене хирĕç тăнă.

Пĕр хаяр çапăçура, 1942 çулхи авăн уйăхĕнче, йывăр аманнă. Госпитальте сипленсен тепĕр темиçе уйăхран каллех хăйĕн тăван полкĕпе пĕрле Хĕвеланăç еннелле тăшмана хăваланă. Украина, Молдави тата Польша çĕрĕсене фашистсенчен хăтарса Германи территорине çитнĕ.

Алексей Иванов сержант хăюллă артиллерист пулнине унăн награда хучĕсенче кăтартса панă.

«Хăюлăхшăн» медалĕн награда хутĕнчен: «3-мĕш батарейăн хĕçпăшал наводчикĕ А.И.Иванов сержант 1943 çулхи сентябрĕн 28-мĕшĕнче Владимировка тăрăхĕнче (Донецк облаçĕ, Волноваха районĕ) тӳрĕ наводкăпа персе тăшманăн пĕр минометне тата икĕ пулеметне, çывăхри нимĕç салтакĕсене тĕп тунă.

1943 çулхи октябрĕн 20-мĕшĕнче пирĕн хӳтĕлев пункчĕ тăшман снарячĕсем лекнипе çунма пуçлать. Иванов ниме пăхса тăмасăр снарядсене йăтса тухса сирпĕнесрен сыхласа хăварнă.

1944 çулхи июнĕн 13-мĕшĕнче Днестр юханшывĕ хĕрринчи плацдарм çывăхĕнче, Ташлык ялĕ (Молдави ССР-ĕ) çумĕнче, хаяр çапăçу вăхăтĕнче хĕçпăшала тĕксе тухнă, тӳрĕ наводкăпа персе пысăк калибрлă тăшман пулеметне аркатнă.

24.06.1944 çул. Украина фрончĕ».

**ИСТОРИЛЛĔ ФАКТ:**

**Донецк облаçĕнчи Владимировка ялне фашистсенчен 1943 çулта хăтарнă. 80 çул иртсен 2022 çулхи июнĕн 11-мĕшĕнче Донецкри ополченецсемпе пĕрле Раççей çарĕсем асăннă яла тепĕр хут Украина националисчĕсенчен ирĕке кăларнă.**

Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕн награда хучĕ:

«Советсен çарĕ Молдавине ирĕке кăларнă чух Иванов сержант хăйĕн умне лартнă задачăсене пурнăçласа хăюлăх кăтартнă. 1944 çулхи çурла уйăхĕн 23-мĕшĕнче Кишинев хули çывăхĕнчи Будешты ялĕ патĕнче Иванов тăшмансем çавăрса илме пуçланине асăрханă, тăхтаса тăмасăрах тĕл персе 10 нимĕç салтакне тĕп тунă.

Çурла уйăхĕн 24-мĕшĕнче Чеканы (Кишинев хули) районĕнче пирĕн 180-мĕш стрелковăй полк тăракан çĕре тăшмансем татти-сыпписĕр пеме пуçланă, Иванов юлташ хĕçпăшала меллĕ позицие вырнаçтарнă, персе нимĕçсен пĕр минометне тата икĕ пулемет точкине тĕп тунă. Çак çапăçура Иванов аманнă, анчах çапăçу хирĕнчен пăрахса кайман.

28.08.1944 ç. 507-мĕш артполкăн командирĕ Дмитриев».

Совет çарĕсем Висла–Одёр операци вăхăтĕнче (12.01.45–03.02.45) çапăçупа 500 çухрăм малалла кайса Польша çĕрне фашистсенчен ирĕке кăларнă. 1945 çулхи январĕн 31-мĕшĕнче малта пыракан пирĕн чаçсем çӳхе пăрпа витĕннĕ Одёр юханшывĕ урлă каçса сулахай çыранĕ хĕрринче темиçе çухрăм сарлакăш плацдарм йышăннă. Гитлеровецсемшĕн çакă кĕтменлĕх пулнă. Кĕçех плацдарма каялла туртса илес тесе нимĕçсен танкĕсемпе пехотисем атакăсем пуçлаççĕ. Фашистсен Люфтваффе самолечĕсем Берлинри аэродромран хăпарса кайса кунĕн-çĕрĕн бомбăсем тăкнă. (Каласа хăвармалла, пирĕн самолетсем çĕр ăшă çанталăка пула пылчăкланса кайнипе сывлăша вĕçсе хăпарайман).

1-мĕш Белорусси фрончĕн командующийĕ К.Жуков приказ кăларнă: «Плацдарм тытмалла!» «Кюстринский плацдарм» сарăлса пынă, кĕçех пирĕннисем



Кюстрин хула-крепоçне те илнĕ. Çак вырăнтан 1945 çулхи ака уйăхĕн 16-мĕшĕнче вара тӳрĕрен Берлин çине анлă наступлени пуçланă.

Çак асăннă плацдарма илме пирĕн ентеш Алексей Иванович Иванов сержант та хутшăннă.

Совет Союзĕн Геройĕ ятне панă награда хутĕнчен:

«Иванов сержант 17.01.45–04.02.45 çулта 5-мĕш ударлă çарăн тăшманăн стратегиллĕ пункчĕсене штурмлакан ушкăнĕнче çапăçса хăюлăхпа палăрнă.

1945 çулхи январĕн 30-мĕшĕнче Иванов сержант хамăр пехотăпа пĕрле Германири Фреденбург хулине çапăçупа кĕме приказ илнĕ. Хула çывăхне çитсессĕн нимĕçсем хирĕç татти-сыпписĕр пеме пуçланă. Иванов сержант тăшман позицине айăккинчен иртсе кайса вĕсен тылне тухнă, тӳрĕ наводкăпа хăйĕн хĕçпăшалĕнчен пеме пуçланă, хулана пĕрремĕш ретре кĕнĕ. Çак çапăçура нимĕçсен пĕр пулеметне, куçса çӳрекен тупăпа («самоходка») персе тата 40-е яхăн гитлеровеца тĕп тунă.

Январĕн 31-мĕшĕнче Ландсберг хулишĕн пынă çапăçура тăшманăн хӳтĕлев позицийĕсен çумĕнчен иртсе, тылран хĕçпăшалпа персе фашистсен орудине тата çумри нимĕç салтакĕсене тĕп тунă. Хăйĕн хĕçпăшалĕпе Одёр юханшыв урлă пĕрремĕш каçнă. Хамăр пехота киличчен нимĕçсен 6 контратакине сирсе янă, икĕ танка аркатнă. Йывăр аманнă пулин те позицине хамăр чаçсем çитиччен тытса тăнă. Çапăçура паттăрлăх кăтартнăшăн Совет Союзĕн Геройĕ ятне тивĕç. 05.02.1945. Дмитриев полковник».

1945 çулхи нарăс уйăхĕн 1-мĕшĕнче Алексей Иванов аманнă, госпитале лекнĕ. Суранĕсем йывăр пулнипе 22 çулти çамрăкăн пурнăçĕ вăхăтсăр татăлнă. Ăна Польшăри тăванла масарта пытарнă.

Алексей Иванов ятне ентешсем манмаççĕ. Ун ячĕпе Вăрнар поселокĕнчи пĕр урам хисепленет, тăван ялĕнче палăк лартнă.

**Вячеслав АЛЕКСЕЕВ, таврапĕлӳçĕ**

# Список лиц, представленных к вручению медали «За доблестный труд в Великой Отечественной войне 1941–1945 г.г.»

*(Продолж. Начало в №77–80, 82–93, 1–4)*

**По Булатовскому колхозу им. Молотова**

Бурмистрова Ирина Яковлевна – скотница
Бурмистрова Мария Степановна
Батленова Анна Алексеевна – колхозница
Бурмистров Василий Андреевич – бригадир
Батленов Яков Андреевич – заведующий пасекой
Батленова Наталья Захаровна – колхозница
Бурмистрова Евгения Кузьминична – колхозница
Батленова Нина Антоновна – колхозница
Бурмистрова Елена Кирилловна – колхозница
Бурмистрова Ксения Федотовна – колхозница
Васильева Ольга Николаевна – колхозница
Воробьева Иустиния
Воробьева Евдокия Алексеевна – овчар
Воробьева Екатерина Ивановна – колхозница
Васильева Пелагея Федоровна – колхозница
Васильева Мария Никитична – колхозница
Васильева Марфа Васильевна – агроном
Воробьева Таисия Никитична – колхозница
Григорьева Анастасия Константиновна – колхозница
Григорьева Евдокия Павловна – колхозница



Комаров Иван Ильич. с.Абызово.

Горбунов Георгий Архипович – колхозник
Григорьева Ольга – колхозница
Герасимова Елена Павловна – учительница
Григорьева Анисия Григорьевна – колхозница
Дифедилова Эдива – колхозница
Ефимова Ольга Сергеевна – охранник
Ефимова Анастасия – колхозница
Егорова Мария Егоровна – колхозница
Ефимов Степан Ефимович – колхозник
Жеребцова Федосия Тарасовна – колхозница
Иванова Анна Ивановна – колхозница – мобилизована на лесозаготовку – лесоруб
Иванов Андриян Иванович – колхозник
Иванова Матрена Ивановна – заведующая фермой
Иванова Елизавета Ивановна – подросток
Игнатьев Николай Игнатьевич – колхозник
Иванова Христина Ивановна – колхозница
Иванова Мария Ивановна – счетовод
Иванова Анна Федоровна – колхозница
Кутузов Василий – колхозник
Кириллов Михаил Кириллович – колхозник
Кириллова Пелагея – колхозница
Клементьева Евгения – конюх
Кириллова Мария Кирилловна – доярка
Короткова Вера – колхозница
Курасова Анисия – колхозница
Канашова Анисия Федоровна – колхозница
Кошкин Николай – 1896 г. – мобилизован на лесозаготовку – возчик
Клачкова Клавдия Терентьевна – колхозница
Кириллов Зиновий Кириллович – колхозник
Михайлова Татьяна Семеновна – колхозница
Матвеева Ольга Матвеевна – колхозница
Михеева Дария Матвеевна – колхозница
Максимова Ксения Алексеевна – колхозница
Максимова Мария – колхозница
Михайлова Ольга Алексеевна – конюх
Михайлов Андрей Михайлович – подросток
Михеев Аркадий Архипович – подросток
Михеев Иван Прокопьевич – конюх, инвалид ВОВ
Макарова Ксения – колхозница
Моисеев Яков Моисеевич – колхозник
Михайлова Ольга Прокопьевна – колхозница
Матвеева Евдокия Никитична – колхозница
Мулгачева Мария – колхозница
Мулгачев Аркадий Григорьевич – подросток
Морозова Мария Николаевна – колхозница
Михеева Анастасия – колхозница
Михеев Станислав Феофанович – подросток
Михеев Иван Михеевич – подросток – скотник
Машанова Матрена Никитична – колхозница
Матвеева Матрена Никитична – колхозница
Михайлова Александра Михайловна – колхозница
Мулгачев Григорий Никитич – колхозник
Машанова Мария Васильевна – колхозница
Максимов Павел – колхозник
Машакова Анастасия – колхозница
Михеева Перасковья Петровна – колхозница
Макаров Спиридон Макарович – колхозник
Михеева Валя Феофановна – колхозница
Николаева Перасковья Кузьминична – конюх
Никитина Акулина – колхозница
Никифорова Татьяна Яковлевна – бригадир
Никифорова Екатерина Никифоровна – колхозница
Незабудкина Марфа – колхозница
Никифорова Мария Никифоровна – колхозница
Осипова Валентина Осиповна – колхозница
Осипова Варвара Осиповна – колхозница
Осипова Матрена Осиповна – колхозница
Осипова Домна Осиповна – учетчица
Петрова Ксения Ефимовна – колхозница
Петров Алексей Петрович – колхозник
Петрова Ксения Петровна – колхозница
Петрова Антонина Петровна – подросток
Петрова Иульяна Павловна – колхозница
Петров Ермолай Петрович – колхозник
Петрова Олимпиада Петровна – колхозница
Павлова Иустиния Павловна – колхозница
Степанова Ирина Степановна – 1926 г. – колхозница – мобилизована на лесозаготовку – лесоруб
Скворцова Екатерина Алексеевна – колхозница
Скворцова Екатерина Прокопьевна – колхозница
Степанов Никифор Семенович – старший конюх
Степанова Мария Никитична – колхозница
Скворцова Елизавета Федоровна – колхозница
Степанов Матвей Степанович – старший конюх, мобилизован по вывозке дров для жд тр., бригадир
Скворцова Ксения Андреевна – свинарка
Семенова Елена – колхозница
Скворцова Перасковья Ивановна – конюх
Степанова Наталья – колхозница
Степанов Иван Степанович – 1927 г. – мобилизован на лесозаготовку – лесоруб
Скворцова Екатерина Павловна – колхозница
Скворцов Сергей Николаевич – кузнец
Скворцова Анна Андреевна – бригадир
Скворцова Анастасия Николаевна – бригадир
Скворцов Федор Николаевич – колхозник
Тихонова Федосия Петровна – колхозница, многодетная
Тихонова Варвара Прокопьевна – колхозница
Тимофеев Семен Тимофеевич – колхозник Трудармии, г. Алатырь
Тимофеева Анна Семеновна – колхозница
Тихонов Степан Тихонович – председатель колхоза
Тихонова Матрена Максимовна – колхозница

**От редакции: Уважаемые подписчики! Если у ваших родных из данного списка лиц имеются фотографии, просим их принести или отправить в редакцию: по эл. почте press_vurnar@rchuv.ru, svetok11@mail.ru, по Телеграм, Ватсап, Вайбер по тел. 89373722600.**

**Список исследован краеведом из д.Хорнзор Федором КУЗЬМИНЫМ**

*(Продолжение следует)*

# Муниципаллӑ харпӑрлӑха куҫӗҫ

**Кӑҫалхи январӗн 1-мӗшӗнчен хуҫи тупӑнман, пушӑ ҫӗрсем муниципаллӑ харпӑрлӑхра пулӗҫ. Ҫапла ӑнлантарать Росреестрӑн Чӑваш енри Управленийӗ. Ку пайсем, тӗрӗссипе – унччен колхозсен пулнӑ, граждансен харпӑрлӑхне куҫнӑ, анчах вӗсем тӗлӗшпе правасене регистрацилемен ҫӗрсем.**



## ҪӖНӖЛӖХ

– Халӗ хӑйтытӑмлӑх органӗсен ку ҫӗр пайӗсем енӗпе муниципаллӑ харпӑрлӑх прависене йышӑнма суда тухма тивмӗ. Пӗтӗмпех ансатрах тата хӑвӑртрах пулӗ. Ҫакӑ хуҫисене кирлӗ мар, уссӑр выртакан ҫӗр участокӗсене ял хуҫалӑх ҫаврӑнӑшне кӗртме май парӗ. Ахаль выртнӑ ҫӗрсем вара лайӑх тупӑш парӗҫ, – палӑртать Управлени ертӳҫи Екатерина Карпеева.

Харпӑрлӑх прависен патшалӑх регистрацине малашне хуҫисем йышӑнман ҫӗр пайӗсен списокне тӑратса ҫырнӑ заявлени тӑрӑх иртерӗҫ. Списока пай харпӑрлӑхҫисен участникӗсен пухӑвӗн решенийӗпе ҫирӗплетни пулмалла.

Чӑваш ен Экономика аталанӑвӗн министерствин даннӑйӗсемпе, округсен администрацийӗсем муниципаллӑ харпӑрлӑха пӗтӗмӗшле 204,4 пин гектар лаптӑкри ҫӗр пайӗсене регистрациленӗ, вӗсенчен 83 процентне – суд йышӑнӑвӗсемпе.

**Хамӑр инф.**

## РЕДАКЦИЕ КИЛНӖ ҪЫРУ

# Кӑмӑллӑ иртрӗ

Иртнӗ шӑматкун Пӑртаса Мускавран, Коломнӑран, Хусантан, Канашран, Кӳкеҫрен, Шупашкартан тата ҫав районти Ишекрен, Вӑрнарпа Санарпуҫӗнчен эпир мӑшӑрланни 50 ҫул ҫитнине паллӑ тума килсе ҫитнӗ тустӑвансемпе ялти хурӑнташсене пире хисеп тунӑшӑн, ыра сунса каланӑ ӑшӑ салам сӑмахӗсемшӗн, парнисемшӗн, ҫак праҫнике ҫитейменнисем телефонпа та пулин саламланӑшӑн (ҫав шутра чикӗ леш енчен те) пурне те чӗререн тав тӑватпӑр. Юбилей кунне пирӗн кӑмӑла туллин тивӗҫтернӗшӗн тав сӑмахӗ Пӑртасри «Космос» магазин ӗҫченӗсене те калатпӑр. Паянхи ҫамрӑк мӑшӑрсен пурин те пирӗн пекех 50 ҫултан кая мар пӗрле пурӑнмалла пултӑр. Таймапуҫ пурне те!

**Любовь Ефремовнапа**
**Геннадий Николаевич**
**ИВАНОВСЕМ**

Пӑртас

# Кашни кун хусканура

**Паянхи пурнӑҫа ҫӗнӗ технологисем самаях ҫӑмӑллатрӗҫ темелле. Нумайӑшӗ вӑхӑта компьютер, телефон е телевизор умӗнче ларса иртерет. Ҫавӑнпа та кун тӑршшӗнче сахал хускану тӑвать.**

ПРОДОЛЖИТЕЛЬНАЯ И АКТИВНАЯ ЖИЗНЬ
НАЦИОНАЛЬНЫЕ ПРОЕКТЫ РОССИИ

## СЫВЛӐХ

Лару-тӑрӑва улӑштарасси пӗтӗмпех сирӗнтен килет. Сывлӑха ҫирӗплетес, вӑй-хала ӳстерес, активлӑрах пулас тесен пӗчӗк утӑмсенчен пуҫламалла. Тӗслӗхрен, кашни кун 30 минутран кая мар уҫӑлса ҫӳремелле е эрнере 3 хутчен спорт занятийӗсем кӗртмелле. Хӑвӑра чӑннипех килӗшекеннине суйламалла. Тӗслӗхрен йога, ишесси, чупасси е ташласси. Кӑмӑла каякан занятисене тӑтӑшах иртерсе пыма ҫӑмӑлтарах. Транспортпа ҫӳрес вырӑнне ҫуран утмалла, картлашка тӑрӑх хӑпармалла, ӗҫ вырӑнӗнче тӑхтав туса разминка иртермелле. Ансат упражненисем мышцӑсене ҫемҫетме, юн ҫаврӑнӑшне лайӑхлатма пулӑшаҫҫӗ. Кун тӑршшӗпе мӗн чухлӗ хускану пулнине ятарлӑ приложенисемпе устройствӑсем урлӑ шута илме пулать.

Малтанхи тапхӑрта тренировкӑсен интенсивлӑхне тата вӑхӑтне пӗчӗккӗн ӳстерсе пымалла. Занятисем вӑхӑтӗнче хӑвӑра мӗнле туйнине сӑнамалла. Ыратнине, япӑх пулнине сиссен нагрузкӑна чакармалла е тӑхтав тумалла. Кашни хускану киленӗҫ, савӑнӑҫ кӳмелле, ҫапла майпа ҫитӗнӳ хыҫҫӑн ҫитӗнӳ пулӗ.

Пурнӑҫа активлӑ хусканусем кӗртме вӑхӑт тата чӑтӑмлӑх кирлӗ. Ҫак процеса тӗрӗс йӗркелесен вӑл пурнӑҫӑн пӗр пайӗ пулса тӑрӗ. Пӗчӗк утӑмсенчен пуҫласа вӑраххӑн хӑвӑрӑн тӗллев патне ҫитме тӑрӑшӑр.

**Екатерина АБЫЗОВА,**
**медицина**
**профилактикин врачӗ**

## СЛУЖБА ПО КОНТРАКТУ




**400 тыс. руб. единовременно (при заключении контракта на срок от года и более);**

**1 400 000 руб. единовременно (региональная денежная выплата);**

**от 210 тыс. руб. в месяц (в зависимости от воинского звания, должности и выслуги лет).**

**По вопросам контрактной службы можно обратиться по адресу: п.Вурнары, ул.Советская, д.20 (администрация округа), каб. 307 с 8 до 17 часов. Тел. 8(83537) 2-51-87, в военный комиссариат по Ибресинскому и Вурнарскому районам.**

**Т. 8-937-397-30-09 (круглосуточно).**

## ВЫБОРЫ

# Информационное сообщение об объявлении дополнительного зачисления в резерв составов участковых избирательных комиссий, образованных на территории Вурнарского муниципального округа

Вурнарская территориальная избирательная комиссия объявляет прием предложений по кандидатурам для дополнительного зачисления в резерв составов участковых избирательных комиссий, образованных на территории Вурнарского муниципального округа.

Прием документов осуществляется Вурнарской территориальной избирательной комиссией в период с 3 по 28 февраля 2025 года.

Предложения принимаются по адресу: Чувашская Республика – Чувашия, Вурнарский район, пгт. Вурнары, ул. Советская, д.20, кабинет ТИК № 105 в рабочие дни с 08.00 до 17.00, обед с 12.00 до 13.00.

**Требования к кандидатурам для зачисления в резерв составов участковых комиссий**

В резерв составов участковых комиссий не зачисляются кандидатуры, не соответствующие требованиям, установленным пунктом 1 статьи 29 (за исключением подпунктов «ж», «з», «и», «к» и «л») Федерального закона «Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации», а также кандидатуры, в отношении которых отсутствуют документы, необходимые для зачисления в резерв составов участковых комиссий.

Дополнительное зачисление в резерв составов участковых комиссий осуществляется на основе предложений: политических партий; общественных объединений; собраний избирателей по месту жительства, работы, службы, учебы; представительных органов муниципальных образований.

**ПЕРЕЧЕНЬ ДОКУМЕНТОВ, представляемых при внесении предложений по кандидатурам в резерв составов участковых избирательных комиссий Чувашской Республики**

**Для политических партий, их региональных отделений, иных структурных подразделений**

1. Решение полномочного (руководящего или иного) органа политической партии либо регионального отделения, иного структурного подразделения политической партии о внесении предложения о кандидатурах в резерв составов участковых комиссий, оформленное в соответствии с требованиями устава политической партии.

2. Если предложение о кандидатурах вносит региональное отделение, иное структурное подразделение политической партии, а в уставе политической партии не предусмотрена возможность такого внесения, – решение органа политической партии, уполномоченного делегировать региональному отделению, иному структурному подразделению политической партии полномочия по внесению предложений о кандидатурах в резерв составов участковых комиссий о делегировании указанных полномочий, оформленное в соответствии с требованиями устава.

**Для иных общественных объединений**

1. Нотариально удостоверенная или заверенная уполномоченным на то органом общественного объединения копия действующего устава общественного объединения.

2. Решение полномочного (руководящего или иного) органа общественного объединения о внесении предложения о кандидатурах в резерв составов участковых комиссий, оформленное в соответствии с требованиями устава, либо решение по этому же вопросу полномочного (руководящего или иного) органа регионального отделения, иного структурного подразделения общественного объединения, наделенного в соответствии с уставом общественного объединения правом принимать такое решение от имени общественного объединения.

3. Если предложение о кандидатурах вносит региональное отделение, иное структурное подразделение общественного объединения, а в уставе общественного объединения указанный в пункте 2 вопрос не урегулирован, – решение органа общественного объединения, уполномоченного в соответствии с уставом общественного объединения делегировать полномочия по внесению предложений о кандидатурах в резерв составов участковых комиссий, о делегировании таких полномочий и решение органа, которому делегированы эти полномочия, о внесении предложений в резерв составов участковых комиссий.

**Для иных субъектов права внесения кандидатур в резерв составов участковых комиссий**

Решение представительного органа муниципального образования, протокол собрания избирателей по месту жительства, работы, службы, учебы.

Кроме того, всеми субъектами права внесения кандидатур должны быть представлены:

1. Письменное согласие гражданина Российской Федерации на его назначение членом участковой избирательной комиссии с правом решающего голоса, зачисление в резерв составов участковых комиссий.

2. Копия паспорта или документа, заменяющего паспорт гражданина Российской Федерации, содержащего сведения о гражданстве и месте жительства лица, кандидатура которого предложена для зачисления в резерв составов участковых комиссий.

**Сообщение о сроках и порядке представления предложений по кандидатурам для назначения в состав Молодежной избирательной комиссии при Вурнарской ТИК**

В связи с истечением срока полномочий действующего состава Молодежной избирательной комиссии при Вурнарской территориальной избирательной комиссии (далее – Молодежная избирательная комиссия) Вурнарская территориальная избирательная комиссия сообщает о приеме предложений по кандидатурам для назначения в состав Молодежной избирательной комиссии.

Формирование Молодежной избирательной комиссии осуществляется Вурнарской ТИК на основе предложений региональных отделений политических партий, молодежных общественных объединений, осуществляющих свою деятельность на территории Чувашской Республики, органов ученического и студенческого самоуправления, Молодежной избирательной комиссии при Вурнарской территориальной избирательной комиссии предыдущего состава.

В Молодежную избирательную комиссию может быть назначено не более одного представителя от каждого регионального отделения политической партии, каждого молодежного общественного объединения, каждого органа ученического и студенческого самоуправления, Молодежной избирательной комиссии при Вурнарской территориальной избирательной комиссии предыдущего состава.

Членами Молодежной избирательной комиссии могут быть граждане Российской Федерации в возрасте от 16 до 35 лет, проживающие на территории Чувашской Республики.

При внесении предложений по кандидатурам в состав Молодежной избирательной комиссии в Вурнарскую территориальную избирательную комиссию представляются следующие документы:

- решение полномочного (руководящего или иного) органа регионального отделения политической партии, молодежного общественного объединения о внесении предложения о кандидатуре в состав Молодежной избирательной комиссии либо решение органа ученического или студенческого самоуправления;
- письменное согласие гражданина Российской Федерации на его назначение членом Молодежной избирательной комиссии;
- копия паспорта или документа, заменяющего паспорт гражданина Российской Федерации, содержащего сведения о гражданстве и месте жительства;
- документ, содержащий сведения о роде занятий (справка с места работы, учебы);
- сведения биографического характера.

Предложения по кандидатурам для назначения в состав Молодежной избирательной комиссии принимаются Вурнарской территориальной избирательной комиссией с 30 января по 1 марта 2025 г. по адресу: пгт Вурнары, ул. Советская, д. 20, каб.105.

Контактный телефон 8 (83537) 2-52-70.